Строительство кун йěркинчен тухмасть

# Малашлăха пăхса ěçлетпěр

Районăн инженери инфраструктури хăвăрт утăмсемпе аталанать. Çакă район администрацийě тěллевлě те эффективлă ěçленине сăнлать.

Район территорине аталантарас ěçěн комплекслă схемине хатěрлесе çирěплетни Муркаш Енре çивěч тăракан социаллă задачăсене 2020 çулччен татса пама пăхнă социаллă экономика сферин аталану процессне ертсе пымалли моделе тума май пачě.

Районти ялсен сăнě тěпрен улшăнчě. Çěнě çуртсем тата вěсене хăвăрт тума пулăшакан çěнě конструкцисем ял çыннишěн çěнěлěх мар ěнтě.

Районта индивидуаллă тата социаллă çурт-йěр тăвасси активлă пырать. Социаллă ипотека кредит программипе района 800 пин тенкě укçа уйăрса панă. Пурăнмалли условисене лайăхлатассипе учетра тăракан 5 çемье çав кредита 600 пин тенкě илнě.



**“Чувашавтодор” предприяти филиалěн Шупашкарти территори производство управленийěн Муркашри прораб участокне Григорий Григорьевич Захаров ертсе пырать. Вěсем районта 170 километр автоçулсем пăхса юсаса тăраççě. Çак ěçре эсир сăн ÿкерчěкре куракан Елена Петровна Черновапа Юрий Львович Овчинников çул ěçченěсен тÿпи те пěчěк мар. Евгений Александрович Викторов мастер (варринче) вара çул çинче ěçлекенсенчен самантлăха та уйрăлмасть. Килěшÿллě ěçленинче мар-и-ха ырă ят никěсě! Çапла пултăрччě те.**

Пур финанс çăлкуçěсене те илсен, кăçал районта пурăнмалли çурт-йěр хута ямалли программа 26400 тăваткал метрпа танлашать. Августăн 1-мěшě тěлне районта индивидуаллă 30 çурт хута кайнă. “Моргаушская” строительство организацийě Муркашри Парк урамěнче нумай хватерлě пурăнмалли çурт (социаллă çурт-йěр), физкультурăпа спорт комплексě тăвассипе ěçлет. Çак вăхăта асăннă строительство организацийěн ěçченěсем Йÿçкассинче ватăсемпе инвалидсен интерначěн 10 вырăнлăх мунчаллă, кěпе çумалли пÿлěмлě, тăватă автомобиль вырнаçмалăх гаражлă хуçалăх блокне хута ячěç, Уйкас Янасалти пěтěмěшле практика врачěн уйрăмне тěпрен юсарěç.

Район территорийěнче автомобиль çÿремелли çулсем тăвассипе тата пăхса тăрассипе те ěçсем пěр вырăнта тăмаççě. Кунта çак подряд организацийěсем ěçлеççě: “Волгодорстрой” ОАО, “Дорисс” ОАО, “Дорстрой” ООО, “Чувашавтодор” патшалăх унитарлă предприяти, “Водстрой” ПМК ОАО, “Чебоксарское ДРСУ” патшалăх унитарлă предприяти, “ПГС-1” ООО, “Дорремстрой” ООО, 146-мěш номерлě “ДЭП” ОАО. Планпа килěшÿллěн кăçал районта 5 километр автоçулсем хута каймалла. Паянхи куна вырăнти пěлтерěшлě 2,615 километр çула эксплуатацилеме пуçланă.



**Вениамин Геннадьевич Соколов “Чувашавтодор” филиалěн Муркашри прораб участокěнче 11 çул ěçлет. Сахал çулсем сарнă-и вăл, сахал юсанă-и?**

Мăн Сěнтěр райповě “Моргаушская” МСО пулăшнипе Москакассинче ял магазинěпе столовăя реконструкцилеме пуçларě.

Ялсен сăн-сăпачě çапла çěнелнě май общество аталанăвě те малтан-мала кайни куçкěрет.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ÿкерчěкěсем.**

Тавралăх тирпей илемěшěн

# Конкурс итогěсем паллă

Ялсене симěслентерес, тирпей-илем кěртес енěпе смотр-конкурс ирттересси йăлана кěчě. Ăна кăçал йěркелесси çинчен район администрацийěн пуçлăхě Ю.А. Ивановăн июнěн 2-мěшěнче 152 номерлě хушăвě тухнăччě. Çакна пурнăçласа районти конкурс комиссине 16 ял тăрăхě, Оринин, Сыпай, Мăн Сěнтěр, Калайкасси, Никасси шкулěсем тата 2-мěш номерлě больница хăйсен ěçěсене тăратнă. Вěсем конкурс валли хěллех хатěрленме тытăннă: вăрăсем илнě, калчасем хатěрленě, лартса çитěнтернě, çум курăксенчен тасатнă. Ку ěçрен районти ытти организацисемпе предприятисем аякра юлнă.

Августăн 17-мěшěнче комисси ларăвě иртрě. Ăна комисси ертÿçи, район администрацийěн пуçлăхěн çумě, капиталлă строительство, пурăмалли çурт-йěрпе коммуналлă хуçалăх тата архитектура уйрăмěн пуçлăхě В.Г. Никитин уçрě. Конкурса тăратнă ěçсемпе район архитекторě Н.Ф. Коннов паллаштарчě. Ялсене симěслентерсе тирпей-илем кěртессипе хатěрленě материалсене пилěк номинаципе тăратмалла пулнă. “Чи лайăх урам” номинаципе тивěçлě ěç тăратман.

Комисси палăртнă тăрăх, республикăра пулса иртекен конкурса виçě ěç тăратма палăртнă:

Муркаш ялě яла симěслентерсе илем кěртес, Мăн Сěнтěр шкулě социаллă сферăри учреждениСене, вěсен çывăхри лаптăкěсене симěслетес, Никольский ячěллě культурăпа кану паркě кану кěтесне чечексемпе лартса илемлетес номиацисемпе аван ěçленě.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Чăваш Республикин Президенчěн Указě

## Чăваш Республикин автомобиль çулěсене тăвассине хăвăрт вěçлес енěпе пурнăçламалли ěçсем

**(Вěçě. Пуçламăшě 1-мěш стр.).**

2006 çулта муниципалитет пěрлěхěсен харпăрлăхне панă автомобиль çулěсене тытса тăма вырăнти хăй тытăмлăх органěсене 2007-2008 çулсенче хушма укçа-тенкě пулăшăвě памалла;

2006 çулхи юпа уйăхěн 1-мěшěччен автомобиль çулěсен çуменчи вырăнсемпе усă курас ěçе йěркелекен Чăваш Республикин нормативлă право акчěсене улшăнусем кěртмелле, çавăн пекех 2007 çулта унта вырнаçнă çуртсемпе сооруженисене, çав шутра автозаправка станцийěсене, ку чухнехи хăрушсăрлăх, архитектура тата паракан пулăшу ěçěсен шайне çитерессине тивěçтеремелле.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органěсене сěнес:

çак Указа пурнăçлама харпăр хăй укçи-тенкине тата Чăваш Республикин республика бюджетěнчен паракан тěллевлě субвенцисене вырăнти пěлтерěшлě автомобиль çулěсене тытса тăма пуринчен ытла пухма;

патшалăх заказчикне, çул-йěрпе строительство организацийěсене малтанхи ирěк паракан документацие хатěрлес тата ěçе йěркелес енěпе пулăшма, тытса тăма паракан вырăнти автомобиль çулěсене муниципалитет харпăрлăхне вăхăтра çырса йěркелессине тивěçтерме;

ялсенче урам – çул-йěр сечěсене аталантарас, çěнетес тата юсас ěçе хăвăртлатма.

4. Çак Указ ăна официаллă йěркепе пичетлесе кăларнă кунран тытăнса вăя кěрет.

**Чăваш Республикин Президенчě Н.ФЕДОРОВ.**
Шупашкар, 2006, çурла, 21, 68№.

## Чăваш Енре çул ыйтăвне 2 çулта татса парěç

***(Чăваш Республикин Президенчěн Н.В. Федоровăн ěçлě канашлура каланă сăмахран)***

Пěлетěр ěнтě, пирěн ялсене пурте усă куракан автомобиль çулěсемпе çыхăнтаракан автомобиль çулěсем тумалли Республика программи пурăçланса пырать. Унпа килěшÿллěн Чăваш Республикинчи мěн пур яла çитмелли çулсене 2015 çулччен туса пěтерме пăхнă.

Калама та кирлě мар ěнтě, йěпе-сапа çанталăкра, уйрăмах çурхи-кěрхи тапхăрсенче, асфальт сарманнипе ялти çулсем тăрăх автотранспортпа çÿрейместěн. Эппин – ялта ял хуçалăхне е ытти ěç-хěлне йěркеллě аталантарма çук. Эппин – шкул ачисене кирлě пек илсе çÿреме йывăр. Эппин – васкавлă пулăшу машинисем вырăна çитейместě тата ытти те.

Çавăнпа та вăйра тăракан Программа ăна хăш вăхăтра пурнăçлама палăртнине кура XXI ěмěрте пире тивěçтерме пултараймасть. Хальхи вăхăтра 486 ялăн хытă сийлě çулсем çук. Çулсем паян кирлě, 10 çултан мар.

Çавна май эпě Программăна пурнăçлассине хăвăртлатма йышăнтăм, ăна 2 çулта пурнăçламалла тесе палăртрăм (2007-2008 çулсенче). Çак тапхăрта 1100 километр автомобиль çулě тумалла. Ку тěллевпе пирěн 9 млрд. тенкě яхăн тупмалла.

Халě 2007 çул валли бюджет йěркелессине вěçлесе пыратпăр. 2007-2009 çулсем валли малашлăх финанс планне çирěплетесси пирки йышăну тунă. Минфин 10 çул малаллахи тапхăрта укçа тупмалли план прогнозне хатěрленě. Çак финанс докуменчěсене ялсене пыракан çулсене пысăк хăвăртлăхпа тăвассине укçапа тивěçтерессине, çавăн пекех бюджетăн мар çăл куççене явăçтарассине пăхнă, вěсемсěр проекта пурнăçлама çук. Эпир пěтěм тěнчери финанс институчěсемпе, кредит учрежденийěсемпе хушма инвестици явăçтарас тěллевпе калаçусем ирттеретпěр.

Кунсăр пуçне, автоçулсене пысăк хăвăртлăхпа тума йышăннипе Чăваш Республикин республика бюджечěн хăш-пěр кăтартăвне тÿрлетÿсем кěртмелле. Вěсем 2007 çулта ěçе кирлě пек йěркелесе ямашкăн кăçалах укçа-тенкěпе усă курма май парěç.

Çавăн пекех хамăрăн çул-йěр ěçченěсен производство хăвачěсемпе эффективлă усă курас ыйтăва татса памалла. Çавăнпа та чăваш подрядчикěсен хăвачěсене ÿстерес енěпе Минстрой сěнÿсем пани кирлě е ытти регионăн строителěсене явăçтармалла.

Проекта эффективлă пурнăçлама, уçăмлатма тÿрě кăмăллă, ěçре тěрěсленнě пěрлехи генеральнăй подрядчике палăртмалла. Ырă çул пултăр, правительствăн хисеплě членěсем!

Эсир ыйтнипе

# “Дача амнистийě” пиркиех

***Ку хутěнче район администрацийěн пурлăх тата çěр хутшăнăвěсен ыйтăвěсемпе ěçлекен пай пуçлăхне Олег Иванович ТИМОФЕЕВА эпир “Дача амнистийě” пирки калаçăва малалла тăснă май (“Çěнтерÿ ялавě”, 67 №) çěр участокěсемпе куçман пурлăх объекчěсене регистрацилеме кирлě документсем, çурт-йěре регистрацилесси пирки ыйтусене уçăмлатса пама ыйтрăмăр.***

– Чи малтанах граждансен çěр участокěн правине çирěплетме кирлě условисем тесе çаксене палăртнă:

**– çěр участокне уйăрса парасси пирки йышăннă акт.** Ăна патшалăх влаç органě е вырăнти самоуправлени органě кăларать. Кунта влаç органěн çěр участокě уйăрса парассипе пěрремěш тапхăра кěрекен кирек епле акчě те кěрет. Унта конкретлă çыннăн çěр участокěн харпăрлăхне палăртмасан та пултарнă. Влаç органěн компетенцийěпе асăннă актсене кăларассин йěркине тивěçлě шайри законодательствăра (федераллă шайра пулмасан та) йěркелемелле;

**– патшалăх влаçěн уполномоченнăй органě çак акта кăларнă вăхăтра тата çак вырăнта вăйра пулнă законодательствăпа килěшÿллěн гражданинăн çěр учатокěн прави пирки панă акт.** Унччехи актран вăл çакăнпа уйрăлса тăрать. Ăна патшалăх влаç органě кăна пама пултарнă тата ку документ правăн уйрăм енне (харпăрлăха, ěмěрлěх усă курмалли харпăрлăха, яланлăх усă курмалли харпăрлăха) е çěр участокěн конкретлă хуçине палăртнă;

**– вырăнти самоуправлени органě гражданинăн хушма хуçалăха аталантарма çěр участокě пурри пирки хуçалăх кěнекинчен çырса пани.** Раççей провинцийěнче ку уйрăмах анлă сарăлнă. Мěншěн тесен ял Совечěсемпе ял администрацийěсенчен ытларахăшěнче унта ěçлекенсем хуçалăхпа çыхăнман кěнекесене çырса пынă, унта конкретлă çěр участокěн хуçи кам пулнине палăртнă. Шел пулин те, хуçалăх кěнекисенче çěр участокěсен хуçисем улшăнни пирки çырса пынисем çителěксěр (тěслěхрен, еткерлěх, килěшÿ, çěр участокне уйăрса пани т. ыт. те) тата тивěçлě документсен копийěсемпе çирěплетмен.

Апла пулин те çак вăхăтчен нотариус практики хуçалăх кěнекисенчен çырса пынине еткерлěхе палăртма кирлě услови тесе шутланă. Çитменнине çěр участокěсем тěлěшпе кăна мар. Халě вара хуçалăх кěнекинчен çырса пынине регистрацилеме тата правăпа усă куракан пур органсемпе должноçри çынсене пěлтерме тивěç.

**– çěр участокě харпăрлăхра пулнине çирěплетекен урăх документ.** Кунта ыйту анлăланать. Пěр енчен, çакна ырламалла кăна. Мěншěн тесен çěр участокěсене уйăрса парас тěлěшпе документсем пěр евěрлě пулман, тепěр енчен илсен вара кунта саккуна пăсас тěслěхсем пуласси те иккěлентермест.

Çěр участокěн правине çирěплетме ытти пур тěслěхри пекех çÿлте асăннă документсемсěр тата заявленисěр пуçне çěр участокěн кадастр планне тăратмалла. Кун пек кадастр планне илме вара çыннăн çěр чиккине палăртма (межевание) сахал мар укçа тÿлеме тивет. Ку ěç вара пěр уйăхран тытăнса икě уйăха çити тăсăлма пултарать, уншăн 10 пин тенкě таран тÿлеме тивет.

Çěр участокěсене харпăрлăха çирěплетнě чух участок калăпăшě пирки документсемпе кадастр планěнче пěр пек марри те пулма пултарать. Ку вара çěр учстокне регистраци тăвас марри пирки сăлтав пулса тăмасть. Уйрăм харпăрлăха памалли мар çěр участкěсене кăна харпăлăха çирěплетмеççě. Енчен те гражданин заявлени, патшалăх пошлини тÿлени пирки документ, кадастр планě тата çÿлте асăннă документсенчен пěрне тăратать пулсан, унран урăх документ ыйтма кирлě мар.

Уйрăм ыйту – хушма хуçалăха тытса пыма уйăракан тата дача участокěсенчи çурт-йěре уйрăм харпăрлăха куçарасси. Саккунпа килěшÿллěн кун пек куçман пурлăх объекчěсене регистрацилессипе, вěсене тăвассипе тата реконструкцилессипе уйрăм йěрке çирěплетнě. Ку объектсене регистрацилеме граждансен регистраци органне çěр харпăрлăхне çирěплетекен документпа куçман пурлăх объекчě пуррине çирěплетекен документ кăна тăратмалла. Анчах та çак условисене пăхăнни кирлě: харпăрлăх хуçисем уйрăм граждансем кăна пулма пултараççě тата объект çÿлте асăннă тěллевпе уйăрнă çěр лаптăкě çинче пулмалла е ăна тума ятарлă ирěк кирлě мар. Объекта туса çитереймен те пулма пултарать.

Строительство ěçěсене пурнăçлама çавăн чухне ирěк пани кирлě мар:

– уйрăм çынна уйăрса панă сад, дача участокěнче гараж тунă чух;

– капиталлă строительствăпа çыхăнман (киосксем, лупассем) объектсем тунă тата реконструкциленě чух;

– çěр участокě çинче тěп çурт-йěре пăхса тăрассипе çыхăннă хушма объектсем (сарай, мунча, çуллахи кухня, теплица, парник т. ыт. те) тунă чух;

– РФ Градостроительнăй кодексěпе тата РФ субъекчěсен градостроительнăй ěçě-хěлě пирки калакан законодательствипе строительство ěçěсем туса ирттерме ирěк кирлě мар чух.

Çавна та каласа хăвармалла. Строительство ěçěсене туса ирттерме ирěк кирлě марри техника регламенчěсене пăхăнмалла марринне пěлтермест. Раççей Федерацийěн субъекчěсем строительство ěçěсене туса ирттерме ирěк кирлě маррисен шутне ытти объектсене те кěртме пултараççě. Тěп услови – çак объекта туни пирки документ пурри. Вěсем вара тěрлěрен пулма пултараççě.